Станьял, Виталий. Кашни апатра – чăваш хĕрарăмĕн ăсталăхĕ : [чăваш халăхĕн апат-çимĕçĕ çинчен] / Виталий Станьял. - Текст : непосредственный // Хыпар : чăваш халăх хаçачĕ. – 2021. – 18 çу/май (№ 51). – С. 4.

# Кашни апатра – чăваш хĕрарăмĕн ăсталăхĕ

«Чăваш халăхĕн апат-çимĕçĕ пуян та тĕрлĕрен. Шăрттан, хуплу, кукар, шӳрпе, çӳрме, тултармăш, маххан, шаркку – хамăр патра çеç мар, аякра та палăрнă чăваш апачĕ тата нумай», – тенĕ Н.Л. Додонов «300 чувашских блюд» кĕнекере. Унтанпа чăваш апачĕ çинчен кĕнеке самаях пичетленчĕ. Чăваш сăйне мухтакан тĕпчев те йышлă. Вĕсенчен Н.В. Никольскин «Пища и питье чувашина» тата «Пища» тĕпчевĕсене палăртас килет. Н.И. Ашмарин словарьне ку енĕпе нимĕнпе те ылмаштарма çук. Сăвă-юрăсăр пĕр ĕçкĕ те иртмен. «Йӳçĕ авăрлă чăмпа йӳçсе çитнĕ мăрсала, çав ятпа ку тăрăхра çӳретеççĕ сим пыла, симĕсрех тĕспе çиçсе чашкăрать тулли курка» е тата унтах «Пăтăпа тулли пиçсе ларчĕ ик касман кăркка» /П.Хусанкай. Хăнара, Пӳлер кĕввисем. 1935/.

Мĕнле тыр-пул, ӳсен-тăран ӳснĕ /ыраш, сĕлĕ, вир, пăри, тулă, хура тул, шур тулă /рис/, урпа, пăрçа, ясмăк /чечевица/, пултăран, серте, хĕрен, кăшкар ути, сарана, кĕпçесем тата пахчара е вăрманта мĕн пур/ – йăлтах усă кӳнĕ. Çĕр улми, купăста, сухан, ыхра, кишĕр, çарăк, кăшман, кавăн, палан, пĕрлĕхен, çĕмĕрт, чие, пилеш, çĕр çырли, хурăн çырли – пурте апата юрăхлă та сиплĕ пулнă.

Çур ĕмĕр каялла апата, çимĕçе уйăрса тăмалли çукчĕ. Салатсене, васкавлăн çыртмаллисене, пулă, кăмпа, çырла-йывăç-курăк сĕткенĕсене, сад, пахча кӳрекен пин ырлăха ятарласа пăхса тăмасăрах усă курнă. Ытти халăх кĕнекисенче пуррисене мар, хамăрăн ăрăмçăсемпе им-юмçăсем ĕмĕртен усă курнă ăсталăхĕпе хĕпĕртенĕ! Халĕ сĕтел калама çук пуян та тулăх. Анчах кунта бульон, тефтель, рулет, гуляш, катлет, рагу, компот ытларах курăнаççĕ. Тĕнчере мĕн чухлĕ халăх, çавăн чухлĕ хăйне евĕр апат. Халĕ интернетра тĕрлĕ рецепта пăхса илме ансат. Мĕнле пĕçермеллине вĕрен кăна! Тутарсем, ирçесем е çармăссем патне çитсе кил, Кăркăсстана е Китая кайса кур – кашнин апат-çимĕçĕ хăйне майлă. Кĕтӳ хăвалакан калмăкăн тюнтэг, кюр, хото, шарсэн керсэнг, булсэн элкен ятлă аш-пăш апачĕсене, казахсен куырдак /кăвăрчак/, куырма-самса, тандыр-самса текеннисене тахçан авал чăваш несĕлĕсем те пĕçерсе çинĕ. Пушкăртсен казы текен лаша ашĕ те ют пулман. Атăл тата Сăр çинче пурăнакан чăвашшăн çăрттанпа çупах ют-и вара? Качака сĕчĕ, мулкач ĕмкĕчĕ, кăмпа кукли çук-и? Шутласа пĕтерейми! Пурнăç улшăннă май апат-çимĕç те, ĕçме-çиме те кулленех ылмашăнать. Тĕрлĕ халăх

пурлăхĕ халĕ пурин те пĕрлехи ырлăхĕ пулса пырать. Хăйне евĕрлĕ те расна çимĕçсем историе çав халăхсен е вырăнсен ячĕпех кĕрсе юлаççĕ. Сăмахран, Мари Эл кăларакан качака сĕтекне /козье мороженое/ халĕ ыттисем те хаваспах йышăнчĕç. Тула пĕремĕкне, пушкăрт пылне, Вологда çăвне тахçантанпах шанчăклăн туянатпăр. Хĕвел çаврăнăш, куккурус вăррисем тата! Чăвашăн питсĕр кукăлĕ, тутарсем вара чăвашсен курăк шывĕпе ĕçмелли пылак е тăварлă /сăра юратакансем валли/ чеп-чеп катăкĕсене хăйсен бренчĕ «чак-чак» туса хучĕç. Савăнмалла кăна пурне те юрăхлă ĕмĕрлĕх апат тума пултарнăшăн!

Атăл тăрăхĕнчи тăванла халăхсемпе пирĕн апат-çимĕçре, йăла-йĕркере, тумтирте, чĕлхере пĕрпеклĕхсем пур, анчах чăваш пурлăхĕ финн-угорсен те, тĕрĕксен те мар. Вăл тĕнчери ытти этносран тымартанах уйрăлса тăрать. Хальхи вăхăтра ирттерекен дегустаци уявĕсенче вĕр çĕнĕ апат-çимĕç те, сыпмалли шĕвек те йышлă курăнаççĕ. Вĕсен хушшинче хамăра тивĕçлĕ пахалăхсемпе чапа тухнă чăваш çимĕçĕсем палăрса тухрĕç. Çапах тăван халăх историне, унăн ăс-хакăл пуянлăхне çиелтен çеç пĕлетпĕр!

«Тинкĕле пĕçернине халĕ никамах та астумасть», – тенĕ ятарлă пысăк статьяра. Эпир вара килте халĕ те тинкĕле хатĕрлетпĕр. Унăн иртнĕ ĕмĕрти шăпине аса илсе, Кĕтне леш енне тырă вырма е утă çулма пуçтарăннă чухне кăнтăрлахи апат валли тинкĕле хутаçне илсе кайнине, ăна вĕри шывра ирĕлтерсе çини пирки каласа пачĕç çывăх çыннăмсем. Арăм тинкĕлене халĕ те хатĕрлет. Тулă кĕрпине лавккара хутаçпа сутаççĕ – типĕтсе авăртас нуши çук. Хамăр халăхăн юратнă çимĕçĕсене хальхисемпе пуянлатса тата техĕмлĕрех туса хăналать вăл пире. «Тинкĕле, толокно. Тинкĕле питĕ тутлă, ăна пирĕн енче кăмăла килмелле пĕçереççĕ. Пăри кĕрпине, çуртарнине, тепĕр хут авăртса çăнăх пек тăваççĕ. Çав çăнăха хуранти вĕри шыва ярса лайăх пăтратаççĕ. Тинкĕлене çăра пĕçереççĕ, ăна вара сарă çупа çиеççĕ. Тинкĕлене урпаран, тулăран, хура тулран, пăрирен, ырашран хутăштарса тăваççĕ. Вĕсене шӳтереççĕ, типĕтеççĕ, шултра авăртаççĕ. Тинкĕле юрнă чухне малтан шывне вĕретеççĕ, тинкĕле çăнăхне вĕренĕ шыва ярса явăштараççĕ, вара çиеççĕ. Тинкĕлене сĕлĕ çăнăхĕнчен тăваççĕ», – тенĕ тĕрлĕ çĕртен янă хутсем тăрăх Николай Ашмаринăн словарĕнче. М.Р. Федотов профессор вара «тинкĕле» сăмах пулăмне тĕрлĕ чĕлхери сăмахсемпе танлаштарса тĕпченĕ /Этимологический словарь чув. яз., П том, 233/. Эппин, ĕмĕрхи çимĕçсене лайăхрах сăнамалла та хальхи саманана юрăхлă пĕçерме тытăнмалла. Мĕн çитмест? Пурте çитет. Нумайăшне пĕçеретпĕр вĕт-ха! Тишкерсе тухар-ха вĕсене.

**Чăвашсен куллен çимеллисем**. Апат /аш апачĕ, сĕт апачĕ, вĕри апат, çăмăл апат, ирхи апат тата ытти те/. Шӳрпе /кăмпа шӳрпи, ăш-пăш шӳрпи,

какай шӳрпи, пулă шӳрпи тата ыт./. Яшка /сĕт яшки, купăста яшки, серте яшки, пултăран яшки, вĕлтĕрен яшки, уй яшки /окрошка/, çăмах яшки, салма яшки/. Нимĕр /çĕр улми нимĕрĕ/. Пăтă /вир пăтти тата ыт./. Ăшаланисем /ашран, çăмартаран, юнран-пĕвертен, пăрçаран – тем те, темрен те/.

**Сĕт-турăх варĕ**. Кĕвелĕк, çĕве турăхĕ /простокваша/, ĕнери /молозиво/, турăх /пĕçерсе кĕвĕлтернĕ сĕт, варенец/, хăймасăр турăх /кефир/, каймак /хăймаллă турăх, ряженка/, тăпăрчă /творог/, сĕвекшу /сыворотка/, сĕтри пулă, сĕтек /мороженое/, çĕве /тăпăрчăпа йӳçĕтнĕ сĕт/, çĕвек, çăвак /пашалу тĕсĕ/, тăвара /сырок/, уйран /пахта/, чăкăт, хăймаллă чăкăт, çу /масло, жир, тĕсĕсем: выльăх çăвĕ, ăш çу, пулă çăвĕ, кантăр çăвĕ, сар çу /топленое масло/, услам çу /сливочное масло/, ӳсен-тăран çăвĕ /растительное масло/, тăвараллă çу /соленое масло/, йӳçĕтнĕ сĕт, хăйма.

**Кĕрпе-çăнăхран тунисем**. Икерчĕ /тĕсĕ нумай – çатма икерчи, кăвас икерчи, çĕр улми икерчи, крахмал икерчи тата ыт. те/. Йăва /колобок, Сурхурире, Мăнкунра, ытти уявра сăйланмалли вĕтĕ пĕремĕк/. Йăвача /çатмара ăшалаççĕ/. Капăртма /оладьи/, катăртка /хрустяшка, печенье/. Картлама. Качмăк. Кăпăркка. Кăрт. Кукăль /питĕ нумай тĕрлĕ, сăмахран, ăшти кукли те пур/. Питсĕр /пицца/. Салма /йăпăлти салма, пĕтĕрнĕ салма, татнă салма, каснă салма, тăсăк салма/. Суктă /кĕрпепе салă хунă кăлпасси/. Çавăрма /скрученное тесто/. Çăкăр. Çăмах /клецки/. Çĕвеке /тăпăрчă шывĕпе пĕçернĕ икерчĕ/. Çӳхӳ. Тăкмаç – лапша тĕсĕ /Ашм., ЧСС, Х1У, 254 с./. Тинкĕле, чепчек /Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1989, 33 с.* Ашм., ЧСС, Х1, 200 с./, ачасем валли пылак тата пысăккисем валли сăра ĕçме тăварлатнă вĕт йăвачана. Пашалу /пашалу тĕсĕ нумай/. Пӳремеч /чăкăтпа, çĕр улмипе, çăмартапа, хăймапа, кантăр вăррипе тунă/. Хуран кукли /ашран, тăпăрчăран, çырларан, çăмартаран т.ыт./. Хăпартлу. Хуплу. Хутлами /кантăр вăрри сапнă ик хутлă пашалу /ЧХС, 5, 329/. Хăпартни /çăмарта хăпартни/. Шушкă. Юсман /йăла валли юсман пăтти хатĕрленĕ/.

**Аш-какайран пĕçернисем**. Ĕнтнĕ сысна ашĕ /свинина копченая/. Сыснан шăнтнă сали. Маххан /лаша ашĕнчен пĕçерсе е тĕтĕмлесе хатĕрленĕ çимĕç/. Сутта /колбаса кровяно-сальная с крупой/. Кăвăрчăк /çăвне шăратса илнĕ хыççăн юлнă аш/. Сӳрме /сурăх-така ăш-чикĕпе ашне хурса пĕçернĕ кăлпасси/. Хуплу /тем тĕрлĕ те пулать/. Тултармăш /мясная колбаса в кишках животного, варенная и жаренная/. Тĕш шӳрпе. Шăнтти, сӳтĕн /студень/. Шарkку. Тĕлкĕр /хирте е вăрманта тытнă тискер кайăкран пĕçернĕ какай тĕсĕ/. Тĕнтĕк /чустапа çăрса, ашлă-çуллă ăш-чике тăварлă шывра пĕçернĕ кукăль/.

**Сăра-эрех тавраше**. Эрех /килте вĕретнĕ хаярлатнă ĕçме/. Эрех /хурăн е вĕрене шывĕнчен тунă ĕçме/. Аншарли /çĕр улмирен вĕретнĕ эрех/. Ханша

/сахăр кăшманĕнчен тунă сăмакун/. Кăмăшка /çăнăх-салатпа тунă эрех/. Кăвас /пылак та кăпăклă хăмласăр сăра/. Кăвасак /шăркаллă сăра/. Кăмăс /кумыс/ сĕт-турăхран хаярлатса тутлăлантарнă шĕвек/. Кăрчама /медовая брага/. Максăма /вĕçĕнчен илнĕ сăра/. Мăрсала /витĕр курăнакан пылак сăра/. Сăра /хăмлапа-салатпа вĕретсе хатĕрленĕ ĕçме/, юрай сăри /нӳхрепре вăрах вăхăт упрама лартнă сăра/. Сим пыл /тин çеç пыллантарнă сăра/. Шерпет /сыта медовая, улма-çырларан хатĕрленĕ пылак эрех/.

**Пахча çимĕçрен, улма-çырла тавракшĕнчен** хатĕрленĕ куллен ĕçмелли шĕвек, кĕсел, сĕткен йышлă, хатĕрлеме ансат. Хальхи пек тăварлă /минераллă/ шыв çăл куçĕсем патне çӳрекен сайра тупăннă. Ытларах усă курнă пылаксем: пан улми сĕткенĕ, хурлăхан шывĕ, йĕплĕ хурлăхан кĕселĕ, чие е слива сухăрĕ, матрӳшке чейĕ, çырла пылакĕ.

Кунта чăвашсен мĕн пур апат-çимĕçне асăнман. Ашмарин, Никольский словарĕсенче, ятарласа тĕпчевсемпе диссертацисенче вĕсем питĕ нумай. Шупашкарта 2001 çулта «Приятного аппетита» ярăмпа тĕрлĕ çимĕçрен /çĕр улмирен, купăстаран, пăрçапа нимĕç пăрçинчен, томатран, кавăнсенчен т.ыт/ хатĕрлемелли рецептсен брошюрисем тата ытти кĕнеке пичетленчĕç. Чăвашсен кашни апачĕн ятĕнче – чăваш хĕрарăмĕсен ăсталăхĕ. Вĕсене халĕ ĕлĕкхи пек мар тĕплĕ «пĕçерсе» кăларма пулать. Тен, чăвашăн тĕнчене шăрттан, хуплу, хуран кукли, сăра кăна сĕнмелле мар? Мĕнрен начар чăваш кăрчами, сим пылĕ, шăнттийĕ, йăвачи тата чăкăчĕ?

Виталий СТАНЬЯЛ